«Чăваш Республикин Элĕк районĕнчи библиотекăсен пĕрлештернĕ системи»
муниципаллă бюджет культура учрежденийĕ
Элĕкри тĕп библиотека

# Çеçпĕл Мишши – чăваш поэзийĕн классикĕ



2019

- ***Çеçпĕл… Тăван поэт «Кăвар чĕреллĕ» чăваш ачисене çырулăх çулĕ çине ĕçлеме чун-чĕререн йыхăракан çамрăк, чăваш çырулăхĕшĕн хăй чĕрине хумхантаракан поэт.***

***Никифор Ваçанкка***



**Çеçпĕл Мишши (Михаил Кузьмич Кузьмин) çуралнăранпа 120 çул çитнĕ май**



- Чăваш совет поэзийĕн никĕсне хываканĕ

**Çеçпĕл Мишши (Михаил Кузьмич Кузьмин)**

1899 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче

Чăваш АССРĕнчи, Канаш районĕнчи Касаккассинче (халĕ Çеçпĕл ялĕ) çуралнă.



Амăшĕ,
Агафья Николаевна
Николаева



Ашшĕ,
Кузьма Фёдоров

- **Амăшĕ, Агафья Николаевна Николаева**
- **Ашшĕ, Кузьма Фёдорович Федоров**

- Ашшĕ-амăшĕ чухăн çынсем пулнă. Вăл 12 çултах ашшĕсĕр тăрса юлнă. Ашшĕсĕр тăрса юлнă кил-йыша пĕчĕк хуçалăхăн пысăк хуйхи пĕтĕмпех Мишша пуçĕ çине тиеннĕ. Мишша çемьере малтанхи ача пулнă. Ун хыççăн Гурий, Петĕр, Кирилл, Илья, Ульяна çуралнă. Вĕсем пурте туслă ӳснĕ.
- Мишша çамрăклах амăшне тĕрлĕрен ĕçре пулăшма тăрăшать : кĕпе çĕвать, кил тавражне тасатать, ака тăвать, кĕтӳ кĕтет. Вăл ӳкерме , юрлама, тĕрлеме те пĕлнĕ, уйрăмах вулама килĕштернĕ.
- Ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, паян пурăнмалăх çăкăр татăкĕ тупас тесе арçын ача ялта кĕтӳ кĕтнĕ. Кунĕ-кунĕпе вăрăм пушă сĕтĕрсе хир тăрăх утнă май Мишшан пуçĕнче пĕр çирĕп ĕмĕт çуралнă- вĕренмеллех. 1914 çулта вăл Шăхасанти икĕ класлă шкула пырса кĕнĕ. Вĕренӳре Мишша лайăх ĕлкĕрсе пынă кăна мар, учительсем вĕрентнинчен те маларах кайма тăрăшнă. Вăл кĕнеке çине тăрăннă. Çакна кура, амăшĕ те Мишшашăн нимĕн те хĕрхенсе тăман.

## Чăваш Республикинчи Канаш районĕнчи Касаккасси ялĕ.Кунта Çеçпĕл ачалăхĕ иртнĕ. 1969 çулта Касаккасси Шĕнер ялне Çеçпĕл ятне панă.



Çеçпĕл Мишши çуралнă çурт.





## Шăхасанти вĕренекенсем хатĕрлекен иккĕмĕш класлă шкулĕ

Шăхасанта вĕреннĕ çулсенче Мишша сăвăсем хайлама пуçлать, М.Лермонтован «Горные вершины» çеммине çывăх йĕркесем шăрçалать. Шăллĕ аса илнĕ тăрăх, пулас сăвăç вырăссен çак поэтне питех те хисепленĕ, унăн «Мцыри» поэмине вара пĕтĕмпех пăхмасăр калама пултарнă. Çав çулсенче вăл вырăсла çырнă «Правила стихосложения» кĕнекене тишкерет, сăвăсем çырма вĕренет. Çак ĕçре вăл вырăс поэзийĕн традицийĕсемпе пĕрлех чăваш халăх нĕрĕн, илемĕн виçисене, хушăран тытăмне те ăша хывса пырать.Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн пулас поэт Шăхасан вулăс кантурĕнче переписчик пулса ĕçленĕ, виçĕ çултан кунтах икĕ класлă шкулта вĕренме тытăинă, литературăпа питĕ интереелен- нĕ, хăй те çырма пуçланă, юлташĕсемпе пĕрле алăпа çырса «Çăлтăр» ятлă журнал кăларса тăнă.

- 1917 çулхи кĕркунне поэт Тутар республикинчи Теччĕ хулинчи учительсем хатĕрлекен семинарие кайса кĕнĕ. Часах çамрăксем хушшинче агитатор пулса ĕçлеме тытăннă.



Бекшеков П.И. юлташĕпе



Теччĕри вĕрентекенсен семинари шкулĕ

- Теччĕре вĕреннĕ чухне унăн çывăх юлташĕ Павел Бекшанский пулнă. Çеçпĕл Мишши юлташĕсемпе пĕрле халăхран кĕнеке пухса библиотека уçать. Каярахпа библиотека заведующийĕнче Чĕмпĕр хулинчен темиçе уйăхлăха пынă вырăс хĕрарăмĕ Анастасия Петровна Червякова ĕçлет. Çеçпĕл мĕн пĕчĕкрен кĕнеке вулама юратнă, пушă вăхăта яланах библиотекăра ирттернĕ. Унта вăл Анастасия Петровнăпа çывăх паллашать, вĕсем пĕр-пĕрне сума суни кĕçех юрату туйăмне çаврăнать.
- Анчах пурнăç шăпи пĕрле пулма пӳрмен мĕн вĕсене. Анастасия Петровнăн Чĕмпĕре таврăнма тивет, Çеçпĕле Шупашкара чĕнсе илеççĕ. Вĕсен урăх курнăçма май килмен. Çеçпĕл Мишши Анастасия Петровна патне çĕре яхăн çыру çырнă.

# Çеçпĕл Мишши Анастасия Червякова патне çĕре яхăн çыру çырнă



**Чунăмçăм, çунатăмçăм**

Ан васка-ха каймашкăн,тăхта-
Пĕр минут, пĕр самант та
пулин!
Талтлатать шух чĕрем кăкăрта,
Юратать те шанмасть те
туллин.

Пĕр минут, пĕр самант та
пулин,
Савнă тусăм манпа эс юлсам,
Пурнăçра эпир иккĕн халь тин
Пĕр çулпа каяймастпăр пулсан!




- **Çеçпĕл, М. Чунăмçăм, çунатăмçăм : (А. П. Червякова патне янă çырусем) / Çеçпĕл Мишши ; [Ю. Сементер куçарнă]. - Шупашкар : КПСС Чăваш обкомен изд-ви, 1989. - 112 с.**



- 1918 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче ăна парти ретне илнĕ. Поэт Чăваш тăрăхĕнче Совет влаçне çирĕплетессишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ паллăран та паллă çынсенчен пĕри пулнă.



- Çеçпĕл Мишши тăван литературăна аталантарас тесе çине тăрсах, чун-чĕререн тăрăшнă, хăйĕн паллăрах сăввисене «Пурнăçпа вилĕм», «Чăваш чĕлхи», «Чăваш ачине», «Эп вилсен», «Чăваш поэтне Ахаха асăнса», «Чăн чĕрĕлнĕ», «Йывăр шухăшсем» т. ыт. те çырнă.

**Шупашкар. Çеçпĕл Мишши çак çуртăн иккĕмĕш хутĕнчи пÿлĕмре пурăннă.**





Çеçпĕл Мишши Шăхасанти вулăс кантурĕн çыруçинче (1911 — 1914), Минск тарахĕнче санитар пуйасĕн санитарĕнче (1916), Хусан коменданчĕн хут ĕçĕсене йĕркелекенĕнче (1918), Теччĕри судпа следстви комиссийĕн следователĕнче тата председателĕнче ĕçленĕ. 1920 çулхи аван уйахĕн 3-мĕшĕнче поэта Чăваш автономи облаçĕнчи Ревтрибунал председательне, юпан 21-мĕшĕнче юстици пайĕн пуçлăхне лартнă. Сăлтавсăр айаплава пула сăвăç 1920 çулхи раштавăн 27-мĕшĕнчен пуçласа 1921 çулхи нарăсăн 7-мĕшĕччен тĕрмере ларнă, ун хыççăн Чăваш облаçĕнчи кĕнеке куçарса кăларакан комиссинче вай хунă.

1921 ç. Çеçпĕл Мишши Чăваш облаçĕнчи кĕнеке куçарса кăларакан комиссинче вай хунă, Чăваш автономи облаçĕнчи Ревком çуртăнче ĕçленĕ.   2003 – мĕш çулта çак çуртра Сеспел музейне уçнă.


















- Çав йывăр вăхăтра Çеçпĕле тепĕр инкек пырса çапнă: шăмă туберкулезĕ ăна пĕтĕмпех аптратса çитернĕ.
- Сывлăхĕ хытах хавшаса çитсен, кăштах сывалма поэт Крыма тухса кайнă. Евпаторири санаторире «Чăваш, чăваш», «Тинĕсе», «Инçе çинçе уйра уяр», «Çĕн Кун аки», «Катаран каç килсен» сăввисене çырнă. Çеçпĕл Мишшин «Çĕн кун аки» сăввине тĕнчери 55 чĕлхене куçарнă.
- Тăван Чăваш çĕршывне вăл каялла таврăнайман. Киеври çыхăну полкĕнче çар службинче тăнă. Остер хулинчи çĕрĕç пайĕнче ĕçленĕ.

# Крым. Евпатори «Талласа» санаторире сывалать.






Киев, Ульяновсен урамĕ, 7. Кунта Çеçпĕл Мишши кар хĕсметĕ
тăнă чухне 1921-1922 çç. пурăннă. Асăну хăмине 1969 çулта сă
суралнăранпа 70 çул тултарнă ятпа уçнă. Киев, 1969. П.Чичкан
ӳкерчĕкĕ
Киев, ул. Ульяновых, 7. В этом доме в 1921-1922 гг. ж
красноармеец М.К.Сеспель. Мемориальная доска открыта к
летию со дня рождения поэта. Киев, 1969. Работа П.Чичканов

## Остер. Кивӗ хула. Çеçпӗл Мишши çӗр пайӗнче ӗçленӗ çурт.



Остер. Кивӗ хула. Çеçпӗл Мишши 1922 çулта уесри çӗр
пайӗнче ӗçленӗ çурт. Ун çине 1951 çулта асăну хăми çап
1979 çулта çурт çапла пулнă (сылтăмри ӳкерчӗкре), хал
çук. Кунта, коммунарсен урамӗнчи 37-а çурт çине, 199
çулта чăвашла-украинла çырса çапнă асăну хăми уçнă.

Остер. Старгородка. В этом доме, в уездном земотдел
прошли последние месяцы жизни Михаила Сеспел
Мемориальная доска открыта в 1951 г. На снимке справа
дом в 1979 г. В 1999 г. на этом месте (ул. Коммунаров 37
а) открыта новая мемориальная доска с надписью н
чувашском и украинском языках.

- 1921 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче Çеçпĕл Киеври илемлĕх шкулне вĕренме кĕнĕ. Унта ик эрнене яхăн вĕреннĕ хыççăн Киеври уес çар комиссариачĕ Çеçпĕле Хĕрлĕ Çар ретне йышăннă. Çак вăхăтра поэт «Хурçă шанчăк» сăвă çырать.
- Курап: чĕрĕлет чăваш ячĕ,
- Таçта аслатиллĕ саспа
- Юратнă çĕршывăн хăвачĕ
- Часрах вăранасшăн тапать...
- Çĕршывăн пит-куçĕ çĕнелĕ,
- Ыран-и, паян-и вăл? — Час...
- Кам «çук» тет, çав — суеç чĕлхеллĕ;
- Кам «мар» тет, çав — суккăр, чапрас.
- Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
- Çĕршывăн хастар ачисем,
- Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,
- Ан юлăр кун-çул уттинчен.
- Çеçпĕл чирĕ амаланса пынă пирки ăна Хĕрлĕ Çар службинчен хăтарнă. Кун хыççăн сăвăç хăйĕн тусĕ Федор Пакрышень патĕнче пурăннă.

то рисунка блокировано приложением PowerPoint



Çеçпĕл Мишши. 1922 çул
А. Алимов ӳкерчĕкĕн фотопортречĕ

- **Çеçпĕл Мишши 1922 çулхи çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕнче Остер хули çывăхĕнчи Кивĕ хула ятлă ялта вилнĕ.**
- Çак тăлăх вил тăпринче Çеçпĕл Мишши вăтăр çул ытла – 1954 çулхи чӳк уйăхĕн 5-мĕшĕччен канлĕ çывăрнă. Унтан вил тăприне çĕнĕ çĕре, Остер хули варрине парка куçарнă.



# Сумлă поэтăмăр халăх асăнче

- Çеçпĕл Мишши çак çĕр çинче пĕтĕмпе те 22 çул çеç пурăнса ирттернĕ пулин те, чăваш культурине пуян еткерлĕх парнелесе хăварнă. Чи малтанах — чăваш поэзине хăйне май пăлхавăр сывлăшĕ кĕртнине палăртмалла. Поэзине çĕнĕлле шухăшлав кĕртсе Ирĕклĕх, Танлăх, Тăванлăх, Тĕрĕслĕх идеалĕсене сăвва кĕвĕлет, уншăн Кĕрешӳ вăйĕпе çине тăмалла тет. Анчах çакна тума çĕнĕ сăвă йĕрки кирлине ăнланса илнĕ вăл. Константин Ивановăн "Нарспи" поэминчи пек çичĕ сыпăклă силлабикăллă сăвă йĕрки çакна тума май памасть иккен. Силлабо-тоникăллă сăвă йĕрки чăваш сăввине çĕкленӳллĕн та хавхалануллăн янăрама май парать.

- Çеçпĕл Мишши силлабикăллă-тоникăллă сăвă виçине кĕртнĕ, ку тĕлĕшпе унăн «Сăвă çырасси» ятлă статйи паллă вырăн йышăнать («Канаш» хаçатра 1920 çулта пичетленсе тухнă). Унăн сăввисем çав тери йывăр вăхăтра халăхăн шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсене паттăр пулма чĕннĕ, кĕрешӳре хавхалантарнă.
- Пурнăçра вал çутă ĕмĕтлĕ, çирĕп кăмăллă, «хыт утăмлă» пулнă. Кăвар чĕреллĕ поэт сăнарĕ пире халĕ те пурнăçа юратма, пуласлăхшăн кĕрешме, яланах хастар та хăюллă пулма вĕрентет. Вăл çырнисем чăваш литературин ылтăн фондне кĕрсе юлчĕç.



- Çеçпĕл Мишши, унăн сăнарĕ, кашни юррисăвви, сăмахĕ Чăваш халăх чĕринче, асĕнче пурăнать. Унăн ятне пăрахута, хăй çуралнă яла, библиотекăсене, шкулсене, Шупашкарти пĕр урама панă. Шупашкарта Çеçпĕл палăкĕ, кинотеатр тата музей пур.
- Çеçпĕле сума суса пирĕн сăвăçсем, композиторсем, ÿнерçĕсем сăвăсем, юрăсам, картинăсем чылай çырнă,«Çеçпĕл» фильм ÿкернĕ.

# Çеçпĕл Мишши сăнарĕ Чăваш халăх чĕринче, асĕнче пурăнать.




«Çеçпĕл»
кинотеатр



«Çеçпĕл»
кинофильм



«Çеçпĕл»
пăрахут



Шупашкарти Çеçпĕл
музейĕ



Шупашкарти Çеçпĕл
палăкĕ



Çеçпĕл ялĕнчи
музей








М.Çеçпĕл ячĕллĕ çамрăксен
театрĕ

# Çеçпĕл сăнарĕ катинăсенче



Сеспель Мишши. Вызов к морю. 1999.



Овчинников Н.В. Сеспель Мишши. 1999.



Федоров Р. Сеспель. 1968.



**Ильин М.А. Сеспель портрече. 1969.**



**Кипарисов П.Г. Михаил Сеспель. 1985.**

# Çеçпĕл Мишшине халанă хайлавсем
























# Библиографи


- Збанацкий, Ю. М. Çеçпĕл : роман / Ю. М. Збанацкий. – Шупашкар : Чăвашиздат, 1963. – 488 с.
- Иванов, Н. Поэт хавалĕ : док. очерк / Н. Иванов. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд–ви, 1984. – 60 с.
- Кăвар чĕре : поэт çинчен аса илнисем / В. А. Долгов пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд–ви, 1979. – 180 с.
- Чичканов, П. Н. Кăвар чĕре : Çеçпĕл Мишши Украинăра : биогр. роман–хроника / П. Н. Чичканов. – Шупашкар : Чăвашиздат, 1965. – 284 с.
- Бекшанский, П. И. Рассказы о Сеспеле : новеллы, воспоминания, письма, размышления / П. И. Бекшанский.– Чебоксары, 1999. – 67 с. : порт.
- Кузьмин, Г. К. Брат мой огнекрылый : воспоминания / Г. К. Кузьмин // Чебоксары, 1999. – 56 с. : порт.
- Михаил Сеспель : библиогр. указ. / Чуваш. респ. б– ка им. М. Горького; сост. : Л. Д. Виссарова, Г. Н. Прокопьева. – Чебоксары : Изд–во Чуваш. ОК КПСС, 1989. – 88 с.
- Наш Сеспел : стихи, проза, статьи и письма М. К. Сеспеля. Воспоминания о поэте. Посвящения : сб. – Чебоксары, 1999. – 260 с.
- Рубис, Н. Н. Встречи с Сеспелем : восп., стихи, письма / Н. Н. Рубис. – Чебоксары, 1999. – 85 с.
- Сеспель Мишши : 1899–1989 / сост. А. Хузангай ; худож. Э. Юрьев.– Чебоксары, 1989. – 15 с. : ил.
- Сироткин, М. Я. М. К. Сеспель : очерк жизни и творчества / М. Я. Сироткин. – Чебоксары : Чувашгосиздат, 1969. – 43 с.
- Основоположник чувашской советской поэзии : учен. зап. / НИИ яз., лит., истории и экономики при Совете Министров Чуваш. АССР. – Чебоксары, 1971. – Вып. 51. – 264 с.
- Поэтика Сеспеля : материалы регион. конф., посвящ. 90–летию со дня рождения М. Сеспеля (22–23 нояб. 1989г.) / НИИ яз., лит., истории и экономики при Совете Министров Чуваш. АССР. – Чебоксары, 1991. – 168 с.
- Агивер, Х. Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ // Агивер, Х. Илем тĕкĕрĕ / Х. Агивер.– Шупашкар, 1991.– С.31–33.
- Асамат, С. Йывăр шухăшсем...: Çеçпĕл ятне каланă кĕлĕ–хўхлев / С. Асмат // Ялав. – 1997. –№ 11. – С.103–108.
- Давыдов–Анатри, В. Вут чĕреллĕ поэт / В. Давыдов–Анатри // Хыпар. – 2000. – 4 нарăс.

- Дмитриев, И. Ирĕке тухнă Çеçпĕл / И. Дмитриев // Хыпар. – 1999. – 12 чӳк.
- Дмитриев, И. Çеçпĕл Мишши – вĕçсĕр шырав / И. Дмитриев, Н. Булаткин // Ялав. – 1994. – № 11. – С. 16–17.
- Егоров, В. Ăсчахпа сăвăç пилĕсем / В. Егоров // Хыпар. – 2003. – 28 çу.
- Ефимов, Г. Унра – пĕтĕм халăх чунĕ / Г. Ефимов // Ялав. – 1999. – № 11–12. – С. 77–78.
- Иванов, Л. Пĕрремĕш ĕç укçи / Л. Иванов // Çилçунат. – 1996. – № 11. – С. 27.
- Иванов, Н. Çĕçпĕлшĕн тăкăннă куççулĕ... / Н. Иванов // Ялав. – 1998. – № 6.– С. 100–107.
- Ишутов, Р. Кăвар сирпĕтет чĕлхипе / Р. Ишутов // Хыпар. – 2003. – 27 çĕртме.
- Кролькова, П. Çеçпĕл Мишши çырăвĕсем / П. Кролькова // Çамрăксен хаçачĕ. – 2002. – 26 июня – 4 июля (№ 26). – С. 4.
- Макарова, Е. Çеçпĕл Мишши – чăваш халăхĕн чапĕпе мухтавĕ / Е. Макарова // Çилçунат. – 1995. – № 11. – С. 14–15.
- Никифоров, А. Хусан тапхăрĕ / А. Никифоров // Ялав. – 1999. – № 11. –12. – С. 90–93.
- Петров, К. Ăста юрист, патшалăх ĕçченĕ : Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 98 çул çитнĕ тĕле / К. Петров // Хыпар. – 1997. – 12 чӳк.
- Петров, К. Никольскипе Тайăр хавхалантарнă / К. Петров // Хыпар. – 1997. –23 авăн.
- Петров, К. Çеçпĕл тымарĕн çичĕ сыпăкĕ / К. Петров // Хыпар. – 1997. – 17 çĕртме.
- Петров, К. Çулăмлă публицист / К. Петров // Ялав. – 1994. – № 11. – С. 28–29.
- Сементер, Ю. Аван–и, Çеçпĕл! / Ю. Сементер // Чăваш ен. – 10–17 авăн (№ 37). – С. 13.
- Сементер, Ю. Çеçпĕл – пирĕн чĕрере / Ю. Сементер // Халăх шкулĕ=Нар. шк. – 1995. – № 1. – С. 93–96.
- Сементер, Ю. Чӳк уйăхĕн варринчи çĕрлехи шухăшсем / Ю. Сементер // Чăваш ен. – 1995. – 18–25 чӳк (№46). – С. 13.
- Скворцова, Р. “Манăн вил тăпри çине курăк ан шăттăр” / Р. Скворцова // Хыпар. – 1995. – 23 чӳк.
- Смирнова, Н. Çеçпĕл çурчĕ “таврăнчĕ“ / Н. Смирнова // Хыпар. – 2003. – 26 нарăс.
- Сунтал, М. Çеçпĕл саманчĕ / М. Сунтал // Чăваш хĕрарăмĕ. – 1999. – 13 чӳк (№ 42). – С. 2.
- Çеçпĕл çинчен / Н. Рубис, Н. Григорьева, А. çхĕл тата ыт. те. ; В. Дмитриев хатĕрленĕ // Тантăш. – 1997. – 20 чӳк. – С. 2.
- Хусанкай, А. Çеçпĕл тата коммунизм идейи / А. Хусанкай // Ялав. – 1994. – № 11. – С. 1.

- Шурыгин, В. Çеçпĕл пултарулăхĕнчи икĕ паянлăх / В. Шурыгин // Хыпар. – 1996. – 21 çĕртме.
- Юмарт, Г. Çеçпĕл куçарма та шутланă / Геннадий Юмарт // Халăх шкулĕ=Нар. шк. – 2000. – № 1. – С. 20–21.
- Юмарт, Г. Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе пултарулăхне малалла тĕпчессин хăш–пĕр ыйтăвĕсем / Геннадий Юмарт // Хыпар. – 2000. – 27 утă.
- Юмарт, Г. Çĕнĕ хыпарсем мĕн калаççĕ / Геннадий Юмарт // Хыпар. – 1999. – 16 чӳк.
- Яковлев, Ю. “Катаран каç килсен” / Ю. Яковлев // Çамрăксен хаçачĕ. – 1997. – 29 чӳк. – С. 4.
- Метин, П. Сатирическая струя в творчестве Сеспеля / П. Метин // Халăх шкулĕ=Нар. шк. – 2000. – № 1. – С. 18–19.
- Мильоном стих мой повторен“ // Выдающиеся люди Чувашии.–Чебоксары, 2002. – Т. 1. – С. 146–154.
- Семенова, З. Сеспель глазами русских учеников / З. Семенова // Халăх шкулĕ=Нар. шк. – 1997. – № 5–6. – С. 97–99.
- Федоров, Н. В. Подвиг и трагедия поэта и гражданина / Н. В. Федоров // Халăх шкулĕ=Нар. шк. – 2000. – № 1. – С. 1–8.
- Юхма, М. Миллиона чувашей певец // Юхма, М. Песнь о Чувашии / М. Юхма. – Чебоксары, 1995. – С. 130–134.
- П. Афанасьев, «Писатели Чувашии», Шупашкар, 2006

- **«Чăваш Республикин Элĕк районĕнчи библиотекăсен пĕрлештернĕ системи»**
  **муниципаллă бюджет культура учрежденийĕ**
  **Элĕкри тĕп библиотека**

- **Методикапа библиографи уйраме**
- **Презентацие пухса хателекене Егорова А.Ф.**